**Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи пурнăç утти**

# Черетсĕр пуху унччченхине çирĕплетрĕ çеç

Паян никама та çăмăл мар. Анчах çакнашкал лару-тăрурах пĕрисем çанă таварса çĕнĕ технологисене алла илсе, ĕç дисциплинине вăйлатса, хавхалантару çулне аталантарса малалла аталанаççĕ пулсан, вĕсемех пурнăç кивĕлле ĕçленине тиркенине тата ĕç çине хуçалла пăхсан йывăрлăхсенче те мал туртăмлă аталанма май пуррине ăнланса ăна ĕçпе çирĕплетеççĕ.

Иртнĕ çур акире Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ăратлă выльăх заводĕнче ĕçлекенсем хуçалăх тилхепине тытса пынă Н. Рудакова В. Семеновпа улăштарчĕç. Унччченхи председатель ун чухнехи пухура саккуна пăснă тĕслĕхсем пур тесе ĕçлесе çав çитменлĕхсене çиеле кăларчĕ. Çапла вара суд хăйĕн йышăнăвĕпе вăл пуху йышăнăвĕ тĕрĕс маррине палăртсан, Муркашсемпе Çурлатрисен хуçалăх тилхепине саккунлă алла пама июлĕн 19-мĕшĕнче черетсĕр пуху ирттерме тиврĕ. Лару-пуху ирттермелли вăхăт пулманран "симĕс ĕç çири" ĕçченсем пухăва палăртнинчен чылай каярах юлса пухăнчĕç. Калаçмалли, кая юлмасăр татса памалли ыйтусем вара вĕсен сахал мар иккен. Тĕп ыйтусем: унччченхи ертӳçĕне ĕçрен хăтарса çĕннине суйласси; правленин çĕнĕ членĕсене суйласси; хуçалăхăн çĕнĕ редакцири уставне йышăнасси т. ыт. те. Кунпа пĕрлех хуçалăхăн производство ĕçĕхĕлĕ те паян кашнинех шухăшлаттарать: хальхи пекех пурăнсан, çитес хĕл каçасси епле пулĕ, хĕл варринче апат шырама тивмĕ-и, хуçалăхăн производство кăтартăвĕсем районта мĕнле шайра? Çак ыйтусем çине кăçалхи ултă уйăх пĕтĕмлетĕвĕсемпе пăхсан йăлтах вырăна ларать.

Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх кăçалхи 6 уйăхра усă куракан 100 гектар çĕр пуçне 109,2 центнер сĕт, 30,4 центнер аш туса районăн вăтам кăтартăвĕнчен сĕтпе самай пĕчĕк, ашпа çав шайра. Пĕтĕмпе Муркашсем кăçал 210 тонна (пĕлтĕрхин 70 процентчĕ) сĕт, 58 тонна аш (пĕлтĕр 49,7 тонна) туса илнĕ. Çулталăк хушшинче мăйракаллă шултра выльăхсен йышне 66 пуç, сыснасен шутне 500 пуç чакарнă. Иртнĕ çулхи пĕрремĕш çур çулта 108 пăру илнĕ пулсан, кăçал – 78 пуç. Сысна çурисем илесси те 1041 пуç чакнă. Производство каялла уксахласан экономика вăйланасси иккĕленӳллĕ. Çапла вара пухăва пынисем пĕр саслă пулнă пекех Н. Рудакова председательтен хăтарса ун вырăнне Виталий Иосифович Семенова шанчĕç.

**А. БЕЛОВ.**

**Вулакан пултарулăхĕ**

## Механизаторсене халалласа

**"Свобода" хуçалăх механизаторĕсемшĕн çыратăп.**

Тырă акнă вăхăтра
Çĕр-аннене юратса,
Ырă хурса вăрлăхра
Çĕр ĕçне мала хурса.
Камсем ĕçлеç çĕр ĕçпе –
Вĕсем пурте телейлĕ.
Унран хаклă ĕçĕ çук –
Пурăнатпăр, куç курать.
Куккурукĕ, ав, авăтать,
Вăл халăха йыхăрать:
Уя тухса ĕçлеме,
Çĕр-аннене юратма.
Трактористсем, пĕлетĕп,
Ĕçлеç хирте ăс-тăнпа:
Калча шăтнă уй-хирте
Çуккă çумсем, тупата.
Çатракасси-Кашмашсен
Мухтанмалли сахал мар:
Хĕрхенмесĕр вăй-халсем
Ĕçлеç вĕсем пăх та кур.
Алексей Михайлович
Хушамачĕ Соловьев.
Чылайранпа вăй хурать
Тракторпала уй-хирте.
Ачаранпах вăл чупса
Трактор хыççăн урамра.
Çитĕнсессĕн вĕренсе
Ĕçлеме трактористра.
Чиновников Анатолий
Ашшĕ ячĕ – Николай.
Çур акине тухсассăн
Кĕме пĕлмест уй-хиртен.
Герман Леонидович,
Хушамачĕ – Алжиров,
Кая юлмасть ашшĕнчен,
Колхоз ĕçĕ-хĕлĕнчен.
Кам пĕлмест пуль ашшĕне,
Леонид Петровича.
Районта мар – Чăвашра
Ятлăччĕ бригадирта.
Александр Валерьевич,
Йӳтĕр каччи – Матвеев,
Шанса панă тракторне
Тытать правур, юсавлă.
Николай Петровича,
Тепрелле – Максимова,
Нимле лаша кирлĕ мар
Трактор пулсан алăра.

***Паян çур акине ăнăçлă ирттернĕ тата выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре çанă таварса ĕçленĕ механизаторсен тĕп ушкăнĕ вырмара вăй хурать. Каламалла, хуçалăхри механизаторсен тăрăшулăхĕпе хуçалăх кĕске вăхăтрах 400 ытла гектар çинчи нумай çул ӳсекен курăксене тата 200 яхăн гектар çинчи пĕр çул ӳсекен курăксене çулса кĕртрĕ. Çакăнти тăрăшулăхпа çитес хĕл кунĕсем валли 700 тоннăна яхăн утă, 2350 тонна сенаж хатĕрлесе хăварчĕ. Вырма лаптăкĕ вара хуçалăхра 1140 гектар. Кунта та вĕсем пит хĕретмессе шанатăп. Паянхи куна хуçалăх 100 гектара яхăн çĕнĕ тырă çапса тĕшĕленĕ те ĕнтĕ. Гектар пуçне тивекен малтанхи тухăç 20 центнер пулнинче механизаторсем хăйсен ĕçĕн тӳпи пуррине те кураççĕ. "Хир карапĕсем" хыççăнах улăм пухас ĕç вăй илсе пырать. Ĕçлекен çын çумăр çунине пăхса лармастех çав.***

**Василий ПАВЛОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**

**Сире валли, Турра ĕненекенсем**

# Шатракасси чиркĕвĕ çĕнĕ шая çĕкленчĕ



Таса Турă Амăш хӳтĕлевĕн чиркĕвĕ.



Таврари ялсенчен чиркĕве çӳрекенсем йышлă.



Чиркӳ тавра хĕреспе утма хатĕрленнĕ вăхăт.

Пурнăç аталанăвĕ пĕр вырăнта тăманни çынсен ăс-хакăлĕнче те палăрма пуçларĕ. Çак улшăну вара общественность чиркӳ еннелле питпе çаврăннинчен те курăнать. "Эй, Çӳлти Аттемĕр, санăн яту хисеплентĕр!", – тесе сăхă сăхаççĕ паян чиркӳ патне куллен майлах çывăхарах та çывăхарах çывхаракан пиччесемпе аппасем. Аслă çул пуçăмăрсен вăхăчĕ вăхăтлăх пулни, Турă вара яланах юнашарри – халăх ăнланăвĕ, пурнăç кăтартăвĕ.

Ялта Таса Турă Амăш хӳтĕлевĕн чиркĕвне уçнăранпа 105 çул çитнĕ тата Асап тӳснĕ Патша çемйинчи çветтуйсен ячĕпе çак чиркӳре уçнă çĕнĕ пайне çутатнă ятпа иртнĕ шăмат кун Шатракассинче Турра ĕненекенсен пысăк праçникĕ пулчĕ. Çак кун чиркĕве çӳрекенсем пĕрле пулса Саватий Владыкăпа пĕрле çĕнĕ пая çветит турĕç. Çапла вара районта икĕ престоллă Турă çурчĕ ĕçлеме пуçларĕ.

– Паян мана çак чиркĕвĕн иккĕмĕш престолне çветит тума Турă хăй пиллерĕ. Ялта чиркӳ уçăлсан та ăна икĕ çул каялла çветит тума мана хутшăнма тӳр килнĕччĕ. Куратăп, Таса Турă Амăшĕ мана çак чиркĕве çӳрекенсемпе тачă çыхăнтарчĕ. Тавах Ăна уншăн. Чиркӳ малалла утăмлани ăрусем хушшинчи çыхăну татăлманнине çирĕплетет. Çынсем Турра ĕненни патне таврăнни Туррăмăрăн пурнăçлайман ĕçĕ çуккине çирĕплетет. Хытса ларнă çĕр çимĕçсем пама пуçларĕ, – терĕ Асап тӳснĕ Патша çемйинчи çветтуйсен ячĕпе уçнă çĕнĕ пая çветит тунă хыççăн Владыка Саватий.

– Пирĕн тĕллев – çамрăксене тивĕçлĕ воспитани парасси. Çак ĕçре чиркӳ пирĕн пулăшуçă пулнине эпир кашниех ăнланатпăр. Чиркӳ çынна ырра вĕрентет. Вăл пирĕн анне, – терĕ районта чиркӳ аталанăвне çул уçса пынăшăн Шупашкар тата Чăваш Митрополичĕн Варнавăран архиерей хутне илнĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов.

Пĕр çын сурать – типсе пырать, халăх сурать – кӳлĕ пулать. Шатракасси чиркĕвĕн аталанăвĕнче те Турра ĕненекен вуншар çын тӳпи курăнать. Çак кун вĕсем пурте Таса Чиркӳ мухтавĕшĕн вăй хунă ятпа архиерей хучĕсене тивĕçрĕç. Вĕсем: Муркашри йăла çурчĕн ертӳçи А. Давыдов, "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикин пуçлăхĕ Н. Ванеркин, чиркӳ старостин ĕçĕсене чунне парса тăвакан О. Тямина, унăн ывăлĕ Шупашкарти сумлă строительство организацийĕн ертӳçин çумĕ Г. Тямин, чиркӳ пачăшки Вячеслав атте т. ыт. те.

Чиркӳ историйĕ вара пуян. Соколов купецăн укçи-тенкипе тунă Таса Турă Амăш хӳтĕлевĕн чиркĕвĕ 1902 çулта уçăлнă. Унăн малтанхи священникĕ Алексей Запольский çĕршыври лару-тăру улшăнсан Улатăр тĕрминче вилнĕ. Анчах вĕсен ĕçĕ харама кайман. Ку çуртра пулнă шкул 1994 çулта çуртсене чиркĕве каялла таварса парать. Мăн Сĕнтĕрти Иван Ашмарин атте малтанхи кунсенче туса хунă Кĕлĕ çуртне кĕлĕсем ирттерме çӳрет. Г. Астраханцева, В. Ямангеев, О. Тямина старостăсем тата ытти ял çыннисем тăрăшнипе Кĕлĕ çурчĕ чиркӳ шайне ӳссе çитет. Паян та вăл маларах асăннă ертӳçĕсен шучĕпе малалла аталанать, ял çыннисене ырра усалтан уйăрма вĕрентет.

**Анатолий ПЕТРОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Турра ĕненни ырă ĕç тума хавхалантарать.



Архиерей хутне район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов тивĕçрĕ.



Владыка Саватий Таса Турă Амăш хӳтĕлевĕн чиркĕвĕнче пĕрремĕш хут мар.



Икĕ престоллă чиркĕве çветит тунă самант.